25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АВГУСТ
5
ЮНКУН
181 (6116) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кашни килограмм тырра, кашни пучаха пухса илмелле

Тырпул фронтĕнчи кĕрешӳ кунсеренех хĕрӳленсе пырать. Республикăри пур колхозсем те кĕрхи тырăсене вырма тытăнчĕç. Малта пыракан колхозсем ыраш вырса пĕтерессĕ те ĕнтĕ. Чылай колхозсем тырă вырнипе пĕр вăхăтрах авăн çапма, çĕнĕ тырра государствăна леçсе парса хăйсен обязательствисене тултарма пуçлассĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн малтанхи кунĕсем ĕçри çитменлĕхсене те кăтартса пачĕç. Çав çитменлĕхсем халĕ ыттăнран та хаклă тăракан тырпул тăккаланса юласси патне илсе пырассĕ.

Хăшпĕр колхозсенче машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе вырас ĕçе хакламанни сисĕнет. Канаш районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз ыраш вырма июлĕн 31-мĕшĕнче тухнă. Анчах машинăсемпе çавасем юлашки кунччене ĕççĕр ларнă. Вĕсемпе пĕлсе, типтерлĕн ĕçленĕ пулсан, колхоз халиччен икĕ-виçĕ хут нумайрах тырă вырса пуçтарнă, çапла майпа тăккаланчăксем те сахалрах пулатчĕç. Çапах та колхоз председателĕ Мартынов юлташ çак чăнлăха ăнланса илесшĕн мар-ха. Чылай колхозсенче тата тепĕр майлă çитменлĕхсем пурри те палăрать. Вĕсем машинăсемпе анлăн усă курассĕ, анчах ĕçĕн пахалăхĕ çине çавăрăнса пăхмассĕ. Çавăнпа вара, жнейкăсемпе е лобогрейкăсемпе вырнă çĕре тухса пăхсан, унта тăкăнса юлнă пучахсене, вырмасăр юлнă вырăнсене курма пулать. Çавна пула кашни гектартах темиçе пăт тырă тăкăнса юлать. Çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать, тырпул пухас ĕçри хуçасăрлăха, юхăнчăклăха хирĕç вăйлăн кĕрешмелле, ĕçре кăтартуллă йĕркелĕх пулмалла. Кунта уйрăмăнах комбайнсем çинчен асăнса хăварас пулать. Зерноуловительсĕр комбайнсем, начар регулировка тунă, тырпула начар выракан е начар çапса тасатакан комбайнсем тырпула нумай тăккаласа хăварассĕ, ун пек комбайнсем пирĕн пулмалла мар.

Уборкăра палăрнă тепĕр çитменлĕх вăл — çулнă тырра кĕлтене çыхас, кĕлтесене çĕмеле хывас ĕç юлса пыни пулса тăрать. Çакă та ĕнтĕ пысăк тăккаланчăксем, пысăк çухатусем патне илсе пырать. Çулса пăрахнă тырпул пĕр кун е икĕ кун çумăр айĕнче выртать те нӳрелсе кайса шăтма тытăнать, хăйĕн пахалăхне çухатать. Çавăнпа та çулнă тырра çийĕнчех çыхса çĕмеле хывас пулать. Çĕмелсене лайăх, типтерлĕ тумалла, çумăр кайса тырра нӳретме ан пултартăр. Çапла тусан çеç эпир вуншар та çĕршер пăт тырра пăсăласран тата тăкăнса пĕтесрен сыхласа хăваратпăр.

ВКП(б) Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕ кăтартса панă тăрăх, уйхирсенче тăкăнса юлнă пучахсене кĕреплесемпе тураса пуçтарас ĕçе организацилемелле. Пучахсене пуçтарас ĕçе кĕçĕн классенче вĕренекенсене анлăн явăçтармалла. Çак кăтартăва халĕ нумай колхозсенче пурнăçа кĕртсе пымассĕ-ха. Канаш районĕнчи «Виççĕмĕш пятилетка» колхоз хирĕнче тăкăнса юлнă пучахсене нумай курма пулать. Р. Захарова колхозница вырнă çĕрте кашни тăваткал метртах вуншар пучах тăкăнса юлнă. Çапла вара кашни гектар çинчех 6 пăт тырă пуçтармасăр юлать. Апла пулин те кунта пучахсене пухас ĕçе организацилемен-ха. Çĕмелсене те типтерсĕр тăвассĕ.

Республикăри колхозсем нумайĕшĕ çак кунсенче авăн çапма тытăнмалла. Ку ĕçре те тăккаланчăксене хирĕç вăйлăн кĕрешни кирлĕ. Авăн çапнă чухне молотилкăсем йĕркеллĕ ĕçлеменни пысăк çухатусем патне илсе пыма пултарать. Тырпулсем улампа тата арпа-хăлчăксемпе хутăшса кайса нумай тăрса юлассĕ. Усă итемсем çинче тасатмасăр усранипе, çумăр айĕнче шӳтерсе янипе тырпул пĕтме пултарать. Урапасемпе михĕсем юсавлă маррине пула тĕшшитырă чылай тăккаланса пĕтет. Çаксем пурте колхоз тырпулне сахаллатассĕ. Çавăнпа та авăн çапас ĕçе лайăх йĕркелессишĕн колхоз председателĕсемпе бригадирĕсен хăйсен çине тăрса тăрăшмалла. Молотилкăсене тивĕçлипе йĕркелесе çитермелле, çапнă тырра çийĕнчех тасатса тата учета илсе амбара кĕртмелле, нӳрĕ тырăсене типĕтес ĕçе организацилемелле, итем çинчи тырра тата складсене сыхласа усрас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Отечественнăй аслă вăрçă хирĕсенче пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсем паттăррăн çапăçассĕ. «Пĕр утăм та каялла чакмастпăр, тăван çĕршывăн пĕр пусăне те тăшмана памастпăр», — теççĕ вĕсем. Пирĕн республикăран кайнă красноармеецсемпе командирсем хăйсен çыравĕсенче колхозниксене кашни килограмм тыршăн, кашни пучахшăн кĕрешме чĕнеççĕ. Тырпулсене пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса кĕртесси — колхозниксемпе колхозницăсен фронт умĕнчи хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Цымлянская, Сальск, Кущевская** районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Пирĕн карапсем Балти тинĕсĕнче нимĕçсен 6 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Августăн 2-мĕшĕнче пирĕн авиацичăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 50 танкне ытла, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине çити, горючи тултарнă 5 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем гитлеровецсен атакисене сире-сире пынă тата чылай участоксенче противникăн танкĕсемпе мотопехотине пыра-пыра çапнă. Пирĕн Утвенко юлташ командир пулса ертсе пыракан часть пĕр кун хушшинче 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 2 бронемашина, 5 станковăй пулемет, радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Н-ски стрелковăй часть активлăн çапăçса нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Çак чаçри боецсем противникран 30 миномет, 4 оруди, 300 винтовка, 8000 патрон тата гранатăсем нумай тытса илнĕ. Совет летчикĕсем пĕр талăк хушшинче сывлăшри çапăçусенче противникăн 18 самолетне персе антарнă.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем противникăн Дон урлă каçнă группировкине хирĕç вăйлăн çапăçнă. Пĕр участокра нимĕçсем, темиçе вуншар танк пухса тăратса, пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем артиллериран персе тата ун хыççăн пирĕн танкистсем контратака тунипе противникăн 8 танкне çĕмĕрнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 250 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

* * *

Сальск районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Пирĕн пĕр соединенин участокĕнче нимĕçсен 5 танкне, 12 противотанковăй орудине, зенитнăй пулеметсен 8 установкине тата 3 минометне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 400 çити вилли выртса юлнă. Кущевская районĕнче уйрăмăнах хаяр çапăçусем пынă. Халăх пурăнакан пĕр пысăк пункт пĕр кун хушшинче 3 хутчен аларан-алла куçнă. Противника пысăк çухатусем тӳстернĕ. Нимĕçсен 7 танкне çĕмĕрнĕ тата 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянск фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Гварди капитанĕн Морозов юлташăн танковăй роти нимĕçсен 2 танкне, 2 орудине, 6 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Гварди кĕçĕн лейтенанчĕн Астаховăн танк экипажĕ тăшманăн пехотине пĕр взвода çити вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн командăй пунктне аркатса тăкнă. Нимĕçсен темиçе офицерне тыткăна илнĕ. Ытти участоксенче пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатас тесе çапăçнă.

* * *

Карели фронтĕнче противникăн пысăках мар групписемпе тытăçа-тытăçа илнĕ. Белофинсен вăйлăлатнă роти çапăçса разведка тума пуçланă. Пирĕн лейтенант Акимкин командир пулса ертсе пыракан взвод противника çывăха янă та ун çине минометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуçланă. Çав çапăçура тăшманăн 50 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Брянск облаçĕнчи партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ противникăн боеприпассем турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Юлашки çапăçусенче партизансем противникăн 56 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 100 салтакĕпе офицерне ытла амантнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен вилнĕ Штрикер обер-ефрейторĕ çумĕнче тупнă çырăвăн, киле яма ĕлкĕрейменскерĕн, хăшпĕр вырăнĕсене илсе пичетлетпĕр:

«Енер, акă, тинех почта çитрĕ. Питех те аван пулчĕ. Эпĕ Генрих Шпорнпа Роберт Траилихран çыру илтĕм. Вĕсем каллех Российăра, тасța кăнтăрта. Францирен çавнашкал хăвăрт илсе тухса каясса вĕсем тĕлĕкре те тĕлленмен. Генрих вĕсен чаçĕ малтанхи çапăçурах çавтери пысăк çухатусем тӳсни çинчен çырать. Роберт вара урсах кайнă. Тылри йăйăрсене, Хĕвелтухăç фронтĕнче вилĕм умĕнче тăраканнисенчен те хăвăртрах аслă вырăнсене хăпарса пыраканскерсене, вăл питĕ те кураймасть... Пирĕн кашнин хăрах ури виле шăтăкĕнче. Ĕлĕк эпир пире килсе улăштарасса чăтаймасăр кĕтсе тăраттăмăр, çĕнĕ чаçсем килсе çитсен пире тыла илсе каяççĕ тесе шутлаттăмăр. Вилнисене кăна улăштарнине халĕ ĕнтĕ эпир тĕплĕнех пĕлсе çитрĕмĕр».

* * *

Италири предприятисенче саботажсемпе диверсисем тăвасси ӳссе кайнă. Падуере паллă мар çынсем çар заводне тата çар пурлăхĕсем усракан склада вут тивертнĕ. Триест çывăхĕнчи торпедăсем тăвакан заводăн сборочнăй цехĕнче вăйлă взрыв пулнă. Цех ишĕлнĕ.

Августăн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Августăн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Цымлянская, Сальск, Кущевская** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Клетская районĕнче халăх пурăнакан пĕр пункт патĕнче итальянецсен дивизине хирĕç çапăçу пуçланса кайнă, çав дивизие нимĕçсен танкĕсем пулăшса пынă. Пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе янă, итальянецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити вĕлернĕ, темиçе танк, 30 оруди, 200 автомашина тата 4 радиостанци пĕтерсе тăкнă.

Совет боецĕсем тăван çĕршывăн кашни пусăмĕшĕн вăйлăн çапăçаççĕ. Н-ски чаçри артиллерин 2 батарейи юлашки çапăçусенче нимĕçсен 18 танкне тата автоматчиксем ларса пынă 12 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Петросьян юлташ командир пулса тăракан батарейăн пур орудийĕсене те стройран кăларнă пулнă. Боецсем гранатăсемпе тата винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă та, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтерсе, противникăн атакине сирсе пăрахнă. Пĕр участокра противникăн самолетне персе ӳкернĕ. Летчик Карл Дитрих Мау тарса пытанма хăтланнă, анчах та ăна казак хĕрарăмĕсем тыткăна илнĕ те совет чаçĕн штабне илсе пырса панă.

* * *

Кущевская районĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă. Нимĕç войскисем юханшыв урлă каçма темиçе хут та хăтланса пăхнă, анчах та вĕсене пысăк çухатусем тӳстерсе каялла хăваласа янă. Н-ски чаçăн участокĕнче кăна нимĕçсен 7 танкне, 14 орудине, 17 пулеметне тата 600 гитлеровецран кая мар пĕтерсе тăкнă. Сальск районĕнче совет войскисем противникăн хаяр атакисене сире-сире пăрахнă. Вăйлă çапăçусем хыççăн пирĕн чаçсем çĕнĕ рубежсем патне чакнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче икĕ енчен те артиллериран персе тăнă тата разведка тăвакан группăсем хăйсен ĕçĕсене туса пынă. Пĕр участокра гвардеец-артиллеристсем 6 йывăр орудие пусарса лартнă, 5 пулемет пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 120 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Старши лейтенант Харитоновăн артиллери батарейи тăшманăн колонни çине сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. Тĕл персе тăрса, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянск фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем, пĕр меллĕ рубежа тытса илес тесе, атака тунă. Пирĕн подразделенин штабĕ умне хăрушлăх тухса тăнă. Старши лейтенант Сосновский, политрук заместителĕ Хасамединов, кĕçĕн лейтенант Панфилов, сержант Новицкий тата красноармеец Прособов, нимĕçсенчен тытса илнĕ пулеметпа, противотанковăй пăшалпа, гранатăсемпе тата автоматсемпе хĕçпăшалланса, противника хирĕç кĕрешсе малалла куçнă. Хастарлă боецсем тĕл персе нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă тата темиçе вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен И. юлташ ертсе пыракан группи противникăн 37 вагонран тăракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. А. юлташ командир пулса ертсе пыракан группа оккупантсен чĕрĕ вăйĕпе техникине илсе пыракан эшелонне крушени тунă. Паровозпа 20 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Францин нимĕçсем оккупациленĕ пайĕнчи железнодорожниксем гитлеровецсен çар хатĕрĕсем турттарас ĕçне чара-чара лартаççĕ. Анатри Сена департаментĕнчи пĕр станцинче Франци патриочĕсем нимĕçсен боеприпассем тиенĕ эшелонне сирпĕнтерсе янă. Дуспе Аррас хушшинчи участокра оккупантсен çар эшелонĕ хытă пынă çĕртех горючи тиенĕ тепĕр состава пырса çапăннă. Взрывсемпе пушара пула 44 вагон, 14 цистерна, 2 паровоз пĕтнĕ. Нимĕçсен нумай салтакĕпе офицерĕ вилнĕ тата аманнă.

* * *

Тĕслĕ металлургире ĕçлекен рабочисем çĕршывпа фронта планран иртгерсе тĕслĕ металл туса пара ççĕ. Уфалейри никель завочĕ июль уйăхĕнче производство программине 117 процент тултарнă. Орскри никель комбиначĕн коллективĕ июль уйăхĕнче программăран иртгерсе 10 танк валли металл туса кăларма обязательство илнĕ пулнă, çав обязательствăна вăл ăнăçлăн тултарнă. Никеле танксем тăвакан Н-ски завода янă та ĕнтĕ.

Пĕр утăм та каялла чакмалла мар!

Красноармеецăн чĕри çакна малалла мĕнле чăтса тăма пултартăр-ха: нимĕç тапăнса пырать, эпир ăна çаплах хамăр çĕре, хамăр хуласемпе ялсене парса пыратпăр, хамăр ачасене, арăмсене, аннесене тискеррĕн асаплантармалла тата чăтма çук хытă мăшкăлламалла туса хуратпăр!

Гитлерла верховнăй командовани хăйĕн ĕçне пурпĕр пулмалла событисем, хăйшĕн питех те хăрушă пулса тăракан событисем килсе çитиччен тума васкать. Вăл совет çĕрне ытларах тытса илме, Дон таврашĕнчипе Кубаньри хăй акман тырăпа усă курма, çапла майпа хăйĕн тылĕнче тата фронтри шухăш-кăмăла тепĕр хут хăпартса яма тăрăшать; Гитлера ĕненекен ухмахсем нумай-ха, совет туллине тиесе пыракан вагонсем, паллах ĕнтĕ, выçăпа аптăранă çынсене хавхалантарĕç.

Германин тылĕ хăйĕн кашни салтакне пурлăх тупса паракан вырăнне хурать: унăн салтакĕ арманлă тата тулă акнă хирлĕ хутор тытса илетех ĕнтĕ, Берлина тарçăсем—славян хĕрĕсене хăваласа пыратех, пĕр татăк çăва та, пĕр тытнă пуллăн хӳрине те вăл илмесĕр хăвармĕ. Германие яма одеялпа мамăк минтере тата казакăн пустав шăлаварне тирпейлесе çĕлесе хурĕ, казак арăмĕ çинчен унăн юбкипе кофточкине хывса илĕ, унăн арчине усса тустарĕ, хăйĕн алли çинчи юнне шăлĕ.

Гитлерла салтаксем пурлăх тупма килеççĕ. Вĕсем малалла талпăнаççĕ, вĕсем юнлă преступлени тăвас ĕçре Гитлерпа тата фашистла пĕтĕм Германипе уйрăлми çыхăнса тăнине пĕлеççĕ,—вĕсем судран вилĕмрен хăраниччен те ытларах хăраççĕ. Германи командованийĕ пирĕн çĕршывăн питех те пуян районĕсем патне—тырăпа нефть патне татса кĕме шухăшлать.

Ун чухне нимĕçсен хăйсен танкĕсене çĕре чавса лартмалла пулмĕ, фашистсен çамрăк, çутă çӳçлĕ ачисенчен пухса тунă командисем ларса пыракан пикировщиксем пирĕн хуласемпе ялсене çĕнĕрен те çĕнĕрен бомбăсем пăрахса çунтарса çӳрĕç, стереотрубăран мĕн куранниие пурне те пĕтерсе пырĕç; пĕчĕк пыракан машинăсене хăвалĕç, сулпа пыракан çынна, корзинкăпа кăмпа илсе пыракан хĕре е тата 14 çулти ачана, çемьине хăйĕн ĕçĕпе тăрантараканскере, ашшĕн чĕркуççи таран пиншакне тăхăнса хăйĕн лаша çавăтса пыракан пĕчĕк шăлнĕпе пĕрле çĕрулми кăлараканскере пулеметран персе вĕлерĕç. Халĕ, шăп çак кунсенче, пĕр кун кая хăвармасăр, паянхи куна Хĕрлĕ Çарăн кашни воинĕ хăйне-хăй çапла каламалла: Чарăн! Пĕр утăм та каялла ан чак! Вырăс çынни, вырăнтан хускалмасăр тăр, тăван çĕршыва хăвăн урусемпе тымар ярса тăр.

Тăшмана курайманнине, ăна унăн мĕнпур юнлă ĕçĕсемшĕн тавăрма чăтаймасăр кĕтсе тăнине тимлĕхпе пĕлсе лештерес пулать. Пĕтĕм хĕрлĕ фронт, мĕнпур чаçсемпе тĕрлĕ йышши хĕçпăшалсем, мĕнпур воинсем—генералсенчен пуçласа халиччен çапăçун вутçулăмĕнче пулмасăр нимĕçсен хăй патне пыракан танкне гранатăсем ывăтса кĕтсе илекен красноармеец таранах, çав мĕнпур çынсем тимлĕн тăни,—акă мĕне пырса çапăнса пĕтсе лармалла ĕнтĕ наступлени тăвакан фашистла çар.

Вырăссем оборонăра та, хирĕç тăрса çапăçнă чухне те, контратакăсем тунă чухне те, наступлени тунă чухне те, çĕр çинче те, сывлăшра та кăтартакан вăйлă, паттăр тимлĕх—акă мĕн пулса тăрать Хĕрлĕ Çарăн ялавĕ.

Чĕркуçленсе ларса эпир хамăрăн таса ялава чуптăватпăр, эпир вырăс çĕрне памăпăр, урăх пĕр утăм та каялла чакмăпăр, тесе тупа тăватпăр.

Пирĕн аслă çĕре куçпа пăхса çавăрăнса—пирĕн çĕр нумай-ха, вăйсем пухмашкăн чакма вырăн пур-ха, тесе урăх шухăшлама юрамасть. Вăйсене пухса тăратнă ĕнтĕ. Тăшмана куçран пăхар, нимĕç хăйĕн куçне хуптăр, унăн куçĕнче вилĕм мĕлки хăрушшăн курăнса кайтăр. Нимĕçсене тытса чармалла. Вырăс хĕçпăшалĕн вăйĕ умĕнче фашистсен ялавĕсем аларан вĕçерĕнсе ӳкĕç.

АЛЕКСЕЙ ТОЛСТОЙ.

(«Правда», августăн 3-мĕшĕнче тухнă номер).

Çамрăксем комсомол ретне кĕреççĕ

СЕНТЕР. Çак кунсенче Юнга ялсоветĕнчи «Родник» колхозри 4 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç. Комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕнче 11 çын тăнă пулсан, халĕ вара 15 комсомолеца çитрĕ.

Ф. ЯНДУШКИН.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Комсомолăн Аслă Чеменри туллимар вăтам шкулти пуçламĕш организацийĕ çак кунсенче 3 çамрăка комсомол ретне илчĕ. Çавăн пекех комсомолăн «Трудовик» колхозри организацийĕнче те çĕнĕрен комсомола кĕнисем 4 çын.

И. МИТРОФАНОВ.

Колхозниксем! Вăрçă вăхăчĕ тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме хушать. Пĕр тăваткал метрта 10 пучах хăварсан, вăл гектарта 6 пăт тырă тăккаласа хăварни пулать

Мирлĕ шухăшсенчен уйрăлмалла

КАЛИНИНО. Районри колхозсем тырăсене суйласа илсе вырма июлĕн 27-мĕшĕнче тытăннă. Уборкăн малтанхи кунĕсенчех ĕçре йĕркелĕхпе дисциплина çирĕп пулни палăрчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен тата çамрăксен ĕçлес хастарлăхĕ питех те пысăк. Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз членĕсем К. Петрова, Д. Софронова, Е. Семенова, О. Архипова колхозницăсем кунне алăпа 0,15—0,17-шер гектар вырса кулленхи ĕç нормине 150—170 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Кунта жнейкăпа тата 28 кĕреплеллĕ çавасемпе туллин усă кураççĕ. Н. Архипова, Г. Михайлов, Х. Карпов юлташсем — вĕсем тырпула çавапа çулас ĕçри опытлă колхозниксем, ĕç тухăçлăхне икĕ хут ытла ӳстерсе ĕçлеççĕ.

Колхозăн сложнăй молотилкипе ĕçлеме машиноведсем çирĕплетнĕ. Кĕлтесене типнине шута илсе, çĕмеле хывса пыраççĕ, итем çине турттараççĕ.

Анчах та районра уборка ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн пулса пырасси çине шанса, лăпланса ларакан колхоз руководителĕсем те пур-ха. Кăкшăмри «Ĕç ялавĕ» колхозра тырă вырма районри ытти колхозсемпе танах тытăннă пулин те, ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерсе пымаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи тырпула кĕске срокра тата тăкăнма памасăр пухса кĕмелле. Ĕçре жнейкăсемпе, кĕреплеллĕ çавасемпе туллин усă курмалла. «Ĕç ялавĕ» колхозра кун çинчен пĕртте шутламаççĕ. Жнейкăсем юсавлă мар, кĕреплеллĕ çавасем туман. Уйра, тырă вырнă çĕрте, шыв çук. Колхозницăсем чĕрессем, витресем йăтса шыв илме яла çӳреççĕ. Уя шыв вĕретсе тухасси не организацилемен.

Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй та, ачасен яслине те уçман. Çавна пула колхозницăсем ултă уйăхри ачисене те уя хăйсемпе пĕрле илсе тухнă.

Г. МАТВЕЕВ.

Ыраша хăвăрт вырса пухма тăрăшаççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 3-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Ялхуçалăхĕнче хĕрӳ ĕçсен тапхăрĕ пырать. Районри пур колхозсем те тенĕ пекех вăйлă тырпула пухса кĕме тухни тата колхозниксемпе МТС-ра ĕçлекенсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлени çинчен пĕлтереççĕ. Августăн 2-мĕш тĕлне районри колхозсем суйласа илнĕ уйрăм участоксем çинче 2.551 гектар ыраш вырнă. Вăл шутран 807 гектар машинăсемпе, 215 гектар кĕреплеллĕ çавасемпе вырнă. Паян, августăн 3-мĕшĕнче, районри колхозсем тырă вырма массăллăн тухрĕç. Малашне ĕнтĕ «ыраш симĕс тесе» тырă вырас ĕçре чарăнса тăма сăлтав çук. Ыраш пур çĕрте те пиçсе çитнĕ. Пĕр кун та кая юлмасăр, ăна хăвăрт вырса пухмалла.

Уборкăн малтанхи кунĕсенчех кунти колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-ра ĕçлекенсем халĕ, çĕршыв йывăр кунсене пурăнса ирттернĕ чухне, ăнса пулнă тырпула кĕске срокра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçленине кăтартса пачĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пурте, пĕр çын юлмиччен, ыраш вырма тухнă. Августăн 3-мĕш тĕлне колхоз 215 гектар ыраш вырнă.

Çавăн пекех тырă вырас ĕç ытти колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. «Звезда» колхоз ĕнерхи кун тĕлне 365 гектар, «Ударник» колхоз 135 гектар, «Маяк» колхоз 113 гектар, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 61 гектар вырнă. Районри колхозсенче тырă вырмалли машинăсем 143 ĕçлеççĕ. Ыран-паянах ыраш вырас ĕçе 25 комбайн хутшăнать. Паян «Звезда» колхозра 3 комбайн ĕçлеме тытăннă.

«Маяк» колхозра ыраш вырнă çĕрте кулленех 12 жнейка ĕçлет. Машинистсем ĕç нормине чылаях ирттерсе тултараççĕ, сменăра 3 гектар çурă вырас вырăнне 4—5 гектар выраççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозра 50 çулти колхозник Н. Попов тата комсомолец Н. Антонов юлташсем жнейкăсемпе кулленех 9—10-шар гектар выраççĕ. Сталин, Ленин ячĕсемпе тăракан, «Звезда», «Маяк» тата ытти колхозсем ыраша кĕреплеллĕ çавасемпе те нумай выраççĕ.

Кĕреплеллĕ çавасемпе ыраша талăкра 0,33 гектар вырмалла пулсан, Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Гаврилова, Караева, Тихонова юлташсем 0,45—0,50-шар гектар выраççĕ. Алăпа выракансен те ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Алибетова Зафура юлташăн звенинчи колхозницăсем («Звезда» колхоз), норма тăрăх çурлапа ыраша 0,10 гектар вырмалла пулсан, кулленех 0,18—0,20-шер гектар выраççĕ.

Тырă вырас ĕçĕн тухăçлăхне ӳстерме колхозра социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă, пĕрлешӳллĕ столовăй тата ачасен яслине организациленĕ. Пысăкрах колхозсенче пĕрлешӳллĕ столовăйсене уйрăм бригадăсенче те уçнă.

П. НИКОЛАЕВ.

Тулăх тырпула пĕр тăкаксăр вырса пухатпăр

КАНАШ, августăн 3-мĕш. (**Телефонпа**). Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ыраш вырма августăн 1-мĕшĕнче массăллăн тухрĕç. Уйра кулен 299 çын хĕрӳллĕн ĕçлет. Колхозăн кăçал 700 гектара яхăн кĕрхи тырăсем пухса кĕртмелле. Партипе правительствăн «1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленийĕнче кăтартса панă ĕç йĕркисене тĕп вырăна хурса, колхозниксемпе колхозницăсем уборкăра пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Кĕрхи тырăсене колхоз 16 ĕçкунĕ хушшинче пĕтĕмĕшпех типтерлĕн вырса пухма, кĕлтене турттарса капансене хывма тăрăшать.

Колхозăн 6 жнейки тата пĕр лобогрейки халĕ ыраша çĕрĕн-кунĕн выраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кĕреплеллĕ çавасемпе те ĕçре анлăн усă кураççĕ. Пĕтĕм ĕçе звеносемпе, пĕрпĕринпе ăмăртса туса пыраççĕ. Уборкăн малтанхи кунĕнче 5-мĕш бригада (бригадирĕ Михайлова) ăмăртура малти вырăна тухрĕ. Уйрăм колхозницăсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Колхозница В. Волкова талăкра 305 кĕлте çыхса пырать, кулленех 2,39 ĕçкунĕ ĕçлесе илет. А. Михайлова тата ытти чылай колхозницăсем те хастарлăн ĕçлеççĕ. Двухсотниксен ретне çĕнĕрен те çĕнĕ çынсем хутшăнаççĕ.

Колхозра ĕç условийĕсене лайăх туса панă. Пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ, 200 ачалăх ясли уçнă, вăл кулленех ĕçлет. Бригадăсенче стена хаçатсем тухма пуçларĕç.

И. МАКСИМОВ.

Вĕренекенсен ĕç отрячĕ 400 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ

Шăхасанри вăтам шкулта вĕренекенсен ĕç отрячĕ «Хĕрлĕ Октябрь» колхозра ыраш вырас ĕçе активлăн хутшăннă. Ыраш вырнă çĕрте кулленех 150 вĕренекен ача ĕçлет. Вĕсем пĕр-пĕрипе ăмăртса, пысăк тухăçлăн ĕçлеççĕ; кĕлте çыхаççĕ, пучах пухаççĕ, тырра çурлапа вырнă çĕрте те активлăн хутшăнаççĕ.

Отряд çак иртнĕ вăхăтра 400 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Ĕçри отличниксем В. Альфонцева 22 ĕçкунĕ, Т. Жилина 25 ĕçкунĕ, М. Гущина 32 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

А. ОРЛОВ.

Шупашкар ĕççыннисем хăйсене валли вутă хатĕрлеççĕ

Кăçалччен Шупашкар çыннисем леспромхозсем хатĕрлесе вутăпа усă курнă. Отечественнăй вăрçă хула çыннисем умне харпăрхăй валли вутă хатĕрлес ыйтăва кăларса тăратрĕ. Рабочисемпе служащисем çакна хапăл туса йышăнчĕç. Шупашкар леспромхозĕ вĕсене Атăл лешъенчи йăлăмран 3 квартал уйăрса панă. Пурĕ 30 пин кубометр хатĕрлемелле. Предприятисемпе учрежденисенчен уйăрса янă çынсем халĕ çак кварталсенче çине тăрсах ĕçлеççĕ. Августăн 5-мĕш тĕлне 6 пин кубометр хатĕрленĕ. Уйрăмах больницăран, ача çуратмалли çуртран, кинотеатртан тата пир тĕртекен фабрикăран пынă рабочисем хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен планне ытлашшипех тултарнă ĕнтĕ.

Норма тăрăх кашни рабочин кунне 3 кубометр хатĕрлемелле. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, чылайăшсем çак нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Сăмахран, Петров (тарпромсоюзран), Полякова (кинотеатртан), Соловьева (Хула Совечĕн исполкомĕнчен) юлташсем кулленех 5-шер кубометр тăваççĕ.

Рабочисене ĕçлеме кирлĕ условисене туса панă: пурăнмалли çуртсем пур, столовăй ĕçлет, хаçатсем пырса тăраççĕ. Агитаторсемпе вулавçăсем тĕнчери лару-тăру, фронтри улшăнусем çинчен калаçусем ирттереççĕ, боевой листоксем кăлараççĕ.

Хăшпĕр учрежденисен руководителĕсем харпăрхăй валли вутă хатĕрлес ĕçе хакламаннине те палăртмалла. Чебторг, сăмахран, халиччен те ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса яман.

Т. ИВАНОВ.

Июль уйăхĕнче лайăх ĕçленĕ предприятисем

Вырăнти промышленноçăн предприятийĕсенчен июль уйăхĕнче Улатăрти тумтирсем çĕлекен мастерской (директорĕ Степанова юлташ) тата Альгешри фабрика (директорĕ Егоров юлташ) лайăх ĕçленĕ. Вĕсем хăйсен уйăхри планĕсене ăнăçлăн тултарнă.

Социализмлă ăмăртăва хутшăначчен Красноармейскинчи промкомбинат плана пĕрре те йĕркеллĕ тултарайман. Ăмăрту рабочисен ĕç тухăçлăхне ÿстерме, вăхăтпа, оборудованисемпе туллин усă курма пулăшнă. Çавна май комбинат коллективĕ иртнĕ уйăхри плана чылай ирттерсе тултарнă.

Вырăнти промышленноçăн предприятийĕсенчен июль уйăхĕнче Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрика (директорĕ Ерышев юлташ) уйрăмах лайăх ĕçленĕ. Фабрика коллективĕ уйăхри программăна 27 кун хушшинчех тултарнă, планран ирттерсе чылай продукци панă. Фабрикăри ăмăртура мастер Резницкий юлташ ертсе пыракан цех мала тухнă. Цехри Кривошея, Пугачевская стахановкăсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнă.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси юлса пырать

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшре вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен, вырăнти ресурссемпе туллин усă курса, хуçалăхра кирлĕ таварсене çителĕклĕ чухлĕ туса кăлармалла тăрăшмалла. Вĕсен умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри вăл — плана пĕтĕмĕшпе кăна мар, пур таварсем енĕпе те тултарасси.

Калас пулать, Çĕмĕрле районĕнчи чылай промысла артелĕсем хăйсене панă заданисене начар пурнăçлаççĕ. Вĕсем юлашки уйăхсенче ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе уйрăмах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. «Труженник» завод кăçалхи çурçул планне пĕтĕмпе те 84,5 процент çеç тултарнă. План тăрăх унăн 40 йышши продукци кăлармалла. Вăл шутра: арча — 200 штука, 50 катка, 150 сĕтел, 50 кровать, 550 пукан, 500 линейка, 4.500 такана тумалла пулнă, анчах нимĕнпе енĕпе те плана 50 процентран ытла тултарман. Сĕтел тăвас тĕлĕшпе плана 41 процент, катка-пичке енĕпе 22 процент çеç тултарнă. Ачасене валли урапасем туса кăлармалли плана та 2 процентран ытла тултарман.

«Красный Октябрь», «Партизан», Ширшов ячĕпе тăракан артельсен ĕçĕсем те çакăн евĕрлех. Куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана вĕсем нихăшĕ те йĕркеллĕн пурнăçласа пымаççĕ.

Районри апат-çимĕç комбиначĕ пĕрремĕш кварталта япăх мар ĕçлерĕ. Ун чухне хулара квас, морс тата ытти те çителĕклĕ пулнă. Иккĕмĕш кварталта плана çуррине те тултарайман. Юлашки вăхăтра вăл квас та çителĕклĕ таран кăлараймасть.

Районри предприятисемпе артельсем çавăн пек япăх ĕçлени вĕсен руководителĕсем вырăнти ресурссемпе туллин усă курманнинчен, чĕртавара урăх çĕртен парасса кĕтсе ларнинчен килет. Ĕçре пуçарулăх сахал. Ку ĕç çине райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ те тимлĕн çавăрăнса пăхмаççĕ.

Пĕр вăхăтра «Красный Октябрь» артельре супăнь туса кăларма май пурри çинчен калаçнăччĕ, ăна тума майсем те пур. Анчах ĕçе паянччен те тытăнман.

Хулара ремонт тăвакан мастерскойсем те начар ĕçлеççĕ. Атă-пушмак юсама парас пулсан, артельсене темиçе хут çитес пулать, хăвăрт юсассине организацилемен.

Ĕççыннисене валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси халĕхи вăхăтра пысăк вырăн йышăнса тăрать. Партипе советăн районри организацийĕсен ку ыйту çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла.

Х. ЛИСИН.

Суту-илĕве лайăхрах йĕркелемелле

ИШЛЕИ. Нумай пулмасть Шурча [illegible] уполномоченнăйĕсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцие сельпон иртнĕ çулти тата кăçалхи çурçулти ĕçĕсем çинчен [illegible] Студенцов юлташăн отчетне итлерĕç.

Сельпо таварçăвăн планне иртнĕ çулхи 102 процент, кăçалхи çур çулта 103 процент тултарнă. Анчах ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурах. Кăçалхи [illegible] кварталсенче [illegible] 50—55 процент çеç тултарнă. [illegible]

Сельпо ситменлĕхĕ вăл [illegible]

П. РЫКОВ.

СВРПУ. Чавараксем сельповĕнчи уполномоченнăйĕсен çак кунсенче пулса иртнĕ конференцийĕнче сельпо ĕçĕ çинчен [illegible] отчет итлерĕç.

Сельпо председателĕ Н. Григорьева юлташăн докладĕнчен [illegible] курăнчĕ. Сельпо 1941 çулта [illegible] планне 75 процент çеç тултарнă, кăçал та [illegible]

Сельпо ялхуçалăх продукчĕсене [illegible]

Халĕ, уборка вăхăтĕнче, колхозниксене çурла-çава, лапаткăсем, лаша, урапа таврашĕсем, кĕреплесем, вĕренсем кирлĕ. [illegible] Сельпо [illegible] Суту-илĕве çак çитменлĕхсене пĕтерме организацилемелле [illegible]

П. ПАВЛОВ.

Виçĕ кун хушшинче пухса çитерчĕç

СЕНТЕР, августăн 4-мĕш. (Телефонпа). [illegible] 576.000 тенкĕлĕх [illegible] 30.000 тенкĕ [illegible] 606.000 тенкĕ [illegible] 597.000 тенкĕ [illegible]

Сатраксем ялсоветĕн председателĕ И. Мартынов, Т. Сергеев тата А. Земляков юлташсем [illegible] 500-шер тенкĕ [illegible]

Д. ИВАНОВ.

Сатраксем ялсоветĕн председателĕ.

Ют çĕршывсенче

„Гитлера халех пырса çапмалла“

Англин общественноçĕпе пичечĕ иккĕмĕш фронт çинчен

ЛОНДОН, августăн 2-мĕш. (ТАСС). «Рейнольдс ньюс» хаçат хăйĕн «Гитлера халех пырса çапмалла» текен умстатьинче çапла çырать: «Кĕрешме пирĕн хĕçпăшал та, вăй-хăват та пур. Пирĕн руководительсем кĕрешĕве халăх пуçлассине кĕтекен мĕнпур халăхăн хĕрÿллĕ ĕмĕчĕсене ертсе пыраççĕ, çаксем вĕсем халь ĕнтĕ тÿрремĕнех палăрса тăраççĕ. Пирĕн пурнăçа хăратса тăракан кризис пĕрлешнĕ нацисем, тĕнĕл держависене арçатмалла пырса çапас тесе, хăйсен вăйĕсене 1943-мĕш, 1944-мĕш е 1945-мĕш çулта пухассине кĕтсе тăмасть. Гитлерăн кашни çĕнтерĕвĕ, Атлантика океанĕнче е Кăнтăрти Российăра тăвать-и ăна вăл, пур-пĕрех гитлеризм çĕнтерессин утăмĕ пулса тăрать. Пирĕн ответ—Гитлера пырса çапни пулмалла, çакна ăна пирĕн халех, хамăрăн мĕнпур вăйсене пухса тата хамăрăн çар экономикине Гитлера çапас ĕçе пулăшмалла туса, пурнăçа кĕртмелле. Гитлера пырса çапмалли вырăн вăл Европа континенчĕ пулса тăрать».

«Нью Стейтсмен Энд нейшн» журнал çапла çырать: «Халăх иккĕмĕш фронт уçма ыйтни обществăн пĕр пайĕ правительствăна пĕр ответлăха туймасăр стратегиллĕ политика сĕнни пулса тăмасть, çакă вăл 1940 çултанпа халĕ чи хăрушă лару-тăру пулса тăни çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхни пулать. Иккĕмĕш фронт уçассипе çыхăннă хăрушлăхсемпе йывăрлăхсем çинчен эпир пĕтĕмĕшпех ăнланатпăр. Анчах эпир пĕр япала кăна сĕнме пултаратпăр—иккĕмĕш фронт уçассине васкатмалла».

«Спектейтор» журнал иккĕмĕш фронт пирки çырнă статьяра çапла калать: «Иккĕмĕш фронта уçмалла тата вăл уçăлатех текен шухăшпа кашни çын килĕшет. Çак шухăша ăна Молотов килсе кайнă хыççăн Англипе Америка правительствисем пичетлесе кăларнă официальнăй документсенче, шанчăклă заявленисенче каласа панă. Захватчиксен танкĕсемпе орудийĕсене тата самолечĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте вырăссем куллен-кун хăйсен пурнăçĕсене параççĕ. Çак обстоятельствăсенче, Российăна пулăшас тĕлĕшпе Англипе Америка мĕн тăваççĕ-ха? Вĕсем вăрçăра кирлĕ тĕрлĕрен материалсем ярса тăни тата вĕсен морякĕсем çав материалсене Российăна çитерес тесе хăйсен пурнăçĕсене хăрушлăх умне тăратни питех те кирлĕ тата тĕрĕс ĕç. Анчах нимĕçсем Россия çине хĕссе пынине вăйсăрлатас тĕлĕшпе Англин миллионшар салтакĕсем тата американецсен тăтăшах ÿссе пыракан çарĕсем, Англири лагерьсемпе казармăсенче хăрушсăрлăхра тăраканскерсем, мĕн тăваççĕ-ха? Çак ыйту вăл пурĕ-пĕрех тухса тăрать, ăна ответсăр хăварсан вара пирĕн ĕçсем хăрушла çавăрăнса тухассине кĕтме пулать».

«Англипе Америка,—тесе çырать малалла журнал,—Российăна материалсем тăратас тĕлĕшпе хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем иккĕмĕш фронт тĕлĕшпе те хăйсен обязательствисене çавăн пекех тĕрĕс пурнăçа кĕртесси пирки нимĕн иккеленмелли те çук».

Черчиллĕн резиденцине иккĕмĕш фронта халех туса хума кирли çинчен калакан резолюцисемпе телеграммăсем нумай пырса тăраççĕ. Кăнтăр-Уэльсри горняксен федерацийĕн районри организацийĕнчен премьер-министр патне 70 резолюци пынă. Çав резолюцисенче горняксем Хĕвеланăçĕнче халех кĕрешÿ пуçласа яма ыйтаççĕ. Ланневи хулинчен те çавнашкал резолюцисемех 50 ытла янă.

Железнодорожниксен пĕрлешÿллĕ союзĕн исполнительнăй комитечĕ хăйсен генеральнăй секретарьне союзăн решенийĕсем çинчен премьер-министра каласа пама тата чи çывăх вăхăтсенчех иккĕмĕш фронт уçма ыйтса решени йышăннă.

Июлĕн 30-мĕшĕнче общинăсен палатине тата премьер-министрăн резиденцине Лондонри çар завочĕсенче ĕçлекен пиншер работницăсен представителĕсенчен тăракан делегаци пынă. Çав работницăсен тăванĕсем çарта пурăнаççĕ. Делегаци правительствăна иккĕмĕш фронт уçма кирли çинчен каланă тата мĕнпур рабочисем енчен пĕтĕмĕшпех пулăшу парса тăма сăмах панă.

Чылай пунктсенче—Лидсра, Редингра, Беркенхэдра тата ытти çĕрте—нумайшар пин çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ. Çав демонстрацисенче иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтнă.

Иккĕмĕш фронт уçассине васкатассишĕн США-ра тухса каланисем

НЬЮ-ЙОРК, августăн 2-мĕш. (ТАСС). Европăра иккĕмĕш фронт уçассине васкатма ыйтса, США-ри «Нью Рипаблик» журнал çапла çырать: «Гитлерăн çарĕсем Российăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи çĕçен хирĕсенче çапăçаççĕ. Çак вăхăтта союзниксем усă курма пултараççĕ тата вĕсен çавăнпа усă курмалла та. Германи çарĕн тĕп вăйĕсем Хĕвеланăç Европăран тата хăйсен шалти базисенчен нихăçан та хальхи пек аякра тăман. Коалициллĕ вăрçă туса пынине пула союзниксем Гитлера хирĕç кĕрешес ĕçре нимĕçсенчен ăнăçлăрах вырăнта тăраççĕ, анчах чăн-чăн коалициллĕ вăрçă халĕ пуçланман-ха, ăна мĕнле те пулин хăвăртрах пуçласа ямалла».

«Иккĕмĕш фронт çине, — тесе çырать «Нью Рипаблик» журнал, — Российăна хĕсессине вăйсăрлатмалли средство çине пăхнă пек кăна мар пăхмалла, çакă вăл Англипе Америка гитлерла Германие хирĕç туса пыракан вăрçăн чи ăнăçлă меслечĕ пулса тăрать».

Производствăллă профсоюзсен конгресĕн Балтиморта тухакан «Ньюс» хаçачĕ статья пичетлесе кăларнă. Вăл статьяра çапла каланă: иккĕмĕш фронта халех уçассинчен пăрăнсан, вăрçă питех те вăраха кайнă пулĕччĕ тата вăл çавтери хакла ларнă пулĕччĕ.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Питтсбургри профсоюз организацийĕсен 100 руководителĕ ытла Рузвельт патне телеграмма янă, çав телеграммăра вĕсем «иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе хăвăртрах ĕçлеме» ыйтаççĕ.

Коннектикут штатĕнчи машиностроени, пир-авăр, авиаци тата промышленноçăн ытти чи паха отраслĕсенчи профсоюзсен паллă лидерĕсем — 50 çын президент Рузвельт патне çыру янă, çав çырура вĕсем Европăра иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма çине тăрсах ыйтаççĕ.

Америкăри моряксен профсоюзĕ Европăра халех иккĕмĕш фронт уçма ыйтса, Рузвельтпа Черчилль патне телеграммăсем янă. Телеграммăсенче çакна кăтартса панă: Европăна тапăнса кĕни хакла лармаа пултарать, анчах та çак ĕçе вăраха хăварса пыни татах та хаклăраха ларĕ, тенĕ.

Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсем иккĕмĕш фронт уçассине кĕтеççĕ

ЛОНДОН, августăн 2-мĕш. (ТАСС). Чехословаки президенчĕ Бенеш чехсен Англире тăракан салтакĕсене çапла чĕнсе каланă: «Вăрçă хăçанччен тăсăлассине Европăра кăçал иккĕмĕш фронт уçнинчен килет. Эпĕ хам çав фронт уçăлассине ĕмĕтленетĕп, хам умма эпĕ çав ыйтăва тивĕçлипе татса парас тĕллев лартрăм. Паллах, ку ĕç хăшпĕр хăрушлăхсемпе çыхăннă, анчах килес çул çав хăрушлăхсем кăçалхинчен ытларах пулма пултарĕç. Иккĕмĕш фронта кăçалах уçни килес çул уçнинчен ытларах ăнăçу тума май парĕ. Иккĕмĕш фронт çывăхри виçĕ уйăх хушшинче Германи вăйĕсен хăшпĕр пайне Хĕвелтухăç фронтĕнчен туртса килме пултарсан, тен, событисем хăвăртраххăн аталанма пуçлĕç, эпир те вара пĕр çул хушшинче килĕ таврăнма пултарăпăр. Вăрçă, тĕрĕссипе, пĕр çултан та каярах тăсăлма пултарать».

Социалист Андрэ Филипп, Франци парламенчĕн депутачĕ пулнăскер, халĕ кĕрешекен Францин шалти ĕçсен национальнăй комиссарĕ пулса тăраканскер, çапла каланă: союзниксем Франципе десант ăнăçлăн антарсан, Франци халăхĕ çиййĕнчех пысăк восстани туса союзниксен войскисене пулăшĕ. Иккĕмĕш фронт ялана Францин шанчăкĕ пулса тăнă, тесе кăтартса панă Филипп. Французсем, уйрăмах оккупациленĕ территори çинче пурăнакан халăхсем, ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнас ĕмĕтпе çунса тăраççĕ.

„Какай“ тата „сахăр“—йывăçран

Франци халăхĕ „эрзацсем“ çиме тытăнать

СТАМБУЛ, августăн 1-мĕш. (ТАСС). Гитлеровецсем çаратакан Франципе продовольстви тĕлĕшĕнчен начарланнăçемĕн начарланса пынă пирки Вишире «апат-çимĕç эрзацĕсем шыраса тупмалли Тĕп бюро» уçнă. Çав бюровăн ятарласа уйăрнă комиссийĕ апат-çимĕçе ытти япаласенчен, уйрăмах «какая» чăрăшран тата «сахăра» йывăçран мĕнле тумаллине вĕренме Германие кайса килнĕ.

Çав комиссин председателĕ проф. Ришар каланă тăрăх, Франципе продовольстви тĕлĕшпе пурнăç ытла та начар пулнипе 12 миллион французăн йывăрăшĕ вăтамран 15-шер килограмм ытла чакнă.

Гитлерла пропагандăн ултавлă хăтланăвĕсем

ЖЕНЕВА, августăн 2-мĕш. (ТАСС). Вырăнти журналистсен ушкăнĕнче çакăн çине уйрăмăнах асăрхаса пăхаççĕ: юлашки вăхăтра гитлерла пропаганда Германире хăйĕнче те, çавăн пекех тата унăн вассалĕсем пулса тăракан çĕршывсенче те Хĕвеланăç Европăри оккупациленĕ çĕршывсен çыранĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе нимĕçсен ĕçĕсем «ăнăçлă» пулса пыни çинчен вăйлăн суйăхма пуçларĕ. Çавăн пекех тата гитлерла пропаганда нимĕçсен çав çĕршывсенче Англипе Америка вăйĕсем континент çине тапăнса кĕнине сирсе яма çителĕклĕ таранах войскăсем пур тесе суйăхать. Гитлеровецсем хăйсен Хĕвеланăçĕнчи вăйĕсене чи пĕчĕк виçене çитиех чакарнă, вĕсен юлашки уйăхсенче Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă фронтне хăйсен çапăçма пултаракан йышлăрах дивизийĕсене Франципе Голландирен ирĕксĕрех куçарса кайма лекнĕ. Çак япала пуриншĕн те паллă пулса тăрсанах, гитлерла пропаганда хăйĕн çÿлте кăтартнă пек «психикăллă атакине» пуçласа ячĕ.

Германин информаци бюровĕ темиçе кун каярах Парижра СС войскисен парачĕ пулса иртни çинчен, çав парада Гитлерăн Франципри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулма нумаях пулмасть уйăрса лартнă Рундштедт генерал йышăнни çинчен анлăн çырса пĕлтернĕ. Çакă питех те тĕлĕнмелле: Германин информаци бюровĕн малтанхи пĕлтерĕвĕнче парадра СС войскисен пĕр чаçĕ пулни çинчен каланă пулсан, тепĕр кунне Германи пропаганди çав парадра СС войскисен пысăк соединенийĕ пулни çинчен пĕлтернĕ, виççĕмĕш кунне вара нимĕçсемпе вĕсен вассалĕсем парадра СС войскисен «темиçе соединенийĕ» пулни çинчен пĕлтерме тытăннă. Кунта çакна паллă тăваççĕ: нимĕçсем хăйсен аллинчи вассаллă çĕршывсене Парижри çав бутафорла парад çинчен вăйлăн шавласа пĕлтерме хушнă. Гавас—ОФИ агентстви: СС войскисен Парижри парачĕ икĕ сехет хушши ытла пынă, тесе пĕлтернĕ. Ютçĕршывсен Берлинри корреспонденчĕсене: çав парад ултă сехет хушши пынă, тесе пĕлтернĕ. Болгарири «Зора» тата «Утро» хаçатсем, гитлеровецсем умĕнче йăпăлтатса, парад сакăр сехет ытла пынă, тесе калаçаççĕ.

Германи пропаганди юлашки кунсенче нимĕçсем хăйсем оккупациленĕ Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен çыранĕсем тăрăх талккишĕпех «хăватлă» укрепленисем туни çинчен уйрăмах вăйлăн шавлама пуçланă. Германин информаци бюровĕ Германи командованийĕн техникăллă штабĕ Ла—Манш çыранĕ хĕррипе тунă укрепленисен системине пăхса тухни çинчен калакан пĕлтерĕве анлăн сарнă.

Вырăнти журналистсен ушкăнĕнче ку ĕçе çапла хаклаççĕ: çав кампание гитлеровецсем Германи противникĕсене улталасшăн тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи операцисене пула гитлеровецсем Хĕвеланăçĕнчи оккупациленĕ территорисене пушатса хăварнине, хăйсен оккупациллĕ вăйĕсенчен ытларахăшне пайне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне куçарса кайнине пытарасшăн пуçласа янă теççĕ.

Иранра кабинет улшăнни

ТЕГЕРАН, августăн 1-мĕш. (ТАСС). Меджлисăн ларăвĕнче Сохейли кабинечĕ отставкăна тухнă. Сохейли çав ларура сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче хăй пуçпулса тăнă кабинетăн пилĕк уйăх хушшинчи ĕçĕ çинчен каласа кăтартнă, унтан вара меджлиспа правительство пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлейменни ăна отставкăна тухма хушни çинчен пĕлтернĕ.

Çĕнĕ кабинета туса йĕркелеме кама хушасси çинчен сÿтсе-явнă чухне, Иранăн политикăллă паллă деятелĕн Ковам Салтанăн кандидатури ытларах сасăсем илнĕ.

Совет спортсменĕсен фашизма хирĕçле митингĕ

Августăн 2-мĕшĕнче Мускаври Союзсен çуртĕн Колоннăй залĕнче совет спортсменĕсен фашизма хирĕçле митингĕ пулса иртнĕ.

Митинга Совет Союзĕн бокс чемпионĕ—партизансен отрядĕнчи боец Николай Королев уçнă.

— Эпĕ çак митингри трибуна çинчен хамăн спортри юлташсене, халĕ хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен те юлташсем пулса тăнăскерсене, тата хамăрăн мĕнпур çамрăксене чĕнсе калатăп. Питĕ тĕл перекенсем пулар, нимĕçсене ытларах пĕтерер. Çапăçура хăюллă пулар, нимĕçсене ытларах вĕлерер. Асталар, нимĕçсене ытларах вĕлерер. Артиллеристсем танкистсем, летчиксем, артиллеристсем пулар, хамăрăн хĕçпăшала тĕплĕн вĕренсе çитер! Эпир паян хамăрăн туссене—Англири, Америкăри тата ирĕклĕхе юратакан ытти çĕршывсенчи спортсменсене чĕнсе калатпăр. Хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен туссем пулса тăракансем! Пирĕн пĕр тĕллев, пĕр шухăш — гитлеризма пĕтересси. Эсир те боевой хисепе пуçласа ярăр, курайман тăшмана пĕтерсе пырăр!

Митингра тата çаксем сăмах тухса каланă: Совет Союзĕн Геройĕ—гимнаст Анатолий Рыжиков, спорт мастерĕ—танковăй войскăсен майорĕ Николай Попылов, малти позицисенчен тин çеç килсе çитнĕскер; СССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Василий Снегов, кĕрешес тĕлĕшпе Европăра чемпиона тухнă тата абсолютнăй чемпион пулса тăнă Иоганнес Коткас (вăл хăйĕн сăмахне хăйĕн тăван эстонец чĕлхипе каланă) тата ыттисем те.

Сталин юлташа салам яма сĕннине пурте питĕ вăйлăн хавхаланса йышăннă. Залра совет халăхĕн çулпуçĕпе учительне хисеплесе тăвăллăн алă çупни нумайччен чарăнман.

Митингра пулнисем пĕтĕм тĕнчери спортсменсене чĕнсе каланине пысăк çĕкленÿпе йышăннă.

Митинг ячĕпе саламлă телеграммăсем Ленинград физкультурникĕсенчен, Çурçĕрти флотăн морякĕсенчен, «Батя» ятлă отрядри партизансенчен, Брянск фронтĕнчи Н-ски чаçран, Англипе Совет Союзĕн туслăх комитетĕнчен, «Норвегири çамрăксен ассоциацин» спорт комитетĕнчен, Форд заводĕнчи автомобильсем тăвакан рабочисен профсоюзĕн атлечĕсен руководителĕнчен Гэллсран, Чикагори тир-сăран ĕçлекенсен профсоюзĕн руководителĕнчен тата ыттисенчен те пынă.

Митинга радио тăрăх панă. (ТАСС).

Августра мĕнле заемсен тиражĕсем пулаççĕ

Август уйăхĕнче виçĕ тираж пулса иртет: августăн 10-мĕшĕнче Государствăн 1938 çулти заемĕн 25-мĕш тиражĕ пулать, августăн 20-мĕшĕнче — Виççĕмĕш пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) заемĕн 15-мĕш тиражĕ тата Виççĕмĕш пилĕкçуллăх (иккĕмĕш çулхи кăларăм) заемĕн 11-мĕш тиражĕ пулса иртеççĕ.

Государствăн 1938 çулти шалти заемăн тиражĕнче 17.040 выигрыш — 11.503.200 тенкĕлĕх выляналь, Виççĕмĕш пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) заемĕн тиражĕнче 518.500 выигрыш — 83.240.600 тенкĕлĕх вылянать, Виççĕмĕш пилĕкçуллăх (иккĕмĕш çулхи кăларăм) заемĕн тиражĕнче 680.800 выигрыш — 108.380.400 тенкĕлĕх вылянать.

Виçĕ тиражĕ те Мускавра пулса иртеççĕ. (ТАСС).

ПĔЛТЕРÜ

Августăн 6-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕн лару-тăру тумалли Залĕнче ыйтусемпе ответсен вечерĕ пулать, вечерăн теми «Тĕнчери лару-тăру».

Вечера ЦК ВКП(б) представителĕ Кочнев юлташ ирттерет.

Билетсене ВКП(б) Хула Комитечĕнче, 124-мĕш номерлĕ пÿлĕмре илмелле.

ВКП(б) хула комитечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарскому пункту Заготзерно требуются: технорук, зав. складами, таксировщики, шофер, охранники, грузчики и чернорабочие — мужчины и женщины.

УТЕРЯННУЮ ПЕЧАТЬ Самукасского колхоза им. Ворошилова, Чебоксарского района, с 26 июля с/г считать недействительной.

Правление.

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ УЧИТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ
в гор. Мариинском Посаде

об'являет прием студентов на все курсы и факультеты на 1942—43 учебный год.

Учительский институт с 2-х годичным сроком обучения готовит учителей для 5—7 классов средней школы и НСШ и имеет отделения: истории (подготовляющее преподавателей истории для 5—7 классов средней школы и НСШ); чувашского и русского языка и литературы (подготовляющее преподавателей чувашского и русского языка и литературы для 5—7 классов средней школы и НСШ); физики и математики (подготовляющее преподавателей физики и математики для 5—7 классов средней школы и НСШ) и естествознания и географии (подготовляющее преподавателей биологии и географии для 5—7 классов средней школы и НСШ).

На I курс принимаются без испытания все лица, окончившие средние школы в 1941 и в 1942 г.г. Окончившие 9 классов средней школы на «отлично» и «хорошо» принимаются без испытаний, остальные — при наличии вакансий.

Испытания будут происходить с 10 по 29 августа. Начало учебных занятий 1 сентября. Все студенты обеспечиваются общежитием, отличникам предоставляется стипендия.

Заявления о приеме и документы (автобиография, аттестат в подлиннике, три фотокарточки и справку об отношении к воинской обязанности для военнообязанных) направлять по адресу: Чувашская АССР, гор. Мариинский Посад, пединститут.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 902 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.